25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ДЕКАБРЬ 3 КĔÇНЕРНИКУН 281 (6216) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Подсобнăй хуçалăхсен ĕçне лайăхлатассишĕн

Пирĕн фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем, служащисем тата инженерла-техникăла работниксем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура вăхăта пĕлмесĕр, вăя шеллемесĕр, мĕнпур тимлĕхпе ĕçлеççĕ, фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах продукци парассишĕн кĕрешеççĕ. Тылри патриотсен ĕçĕ тухăçлăрах та лайăхрах пултăр тесен, пирĕн вĕсен пурнăçпа йăла условийĕсемшĕн тăрăшас пулать, вĕсен апат-çимĕç базине вăйлатса пырас пулать.

Вăрçа пула рабочисемпе служащисене централизованнăй йĕркепе апат-çимĕç парса тăрас ĕç йывăрланчĕ, вĕсен продовольстви базине вырăнтах анлăлатас задача тухса тăчĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртсе пыма пирĕн предприятисен условисемпе майсем çителĕклĕ; вĕсен руководителĕсем, партипе профсоюз организацийĕсем вырăнти ресурссемпе туллин усă курни, ку тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлени тата пуçарулла пулни çеç кирлĕ.

Рабочисемпе служащисен апат-çимĕç базине вăйлатмалли майсенчен пĕри вăл—предприятисем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсем. 1940 çулăн вĕçĕнче Мускав облаçĕнчи Глуховскри комбинат коллективĕ чĕнсе каланине йышăнса, пирĕн республикăри пысăкрах предприятисем хăйсен подсобнăй хуçалăхĕсене организацилерĕç. Иртнĕ икĕ çул хушшинче çав хуçалăхсенчен чылайĕшсем хăйсен çĕр лаптăкне, выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерсе тĕрекленчĕç.

Фабрикăсемпе заводсенче ĕçлекенсен апат-çимĕç базине анлăлатас тĕлĕшпе пирĕн подсобнăй хуçалăхсем 1942 çулта палăх ĕçсем турĕç. Иртнĕ çуркунне пĕтĕм ялхуçалăх ĕçĕсен планне, пĕтĕмĕшле илсен, начар мар пурнăçларĕç: 12 подсобнăй хуçалăх тăрăх ялхуçалăх культурисен акса хăвармалли плана 27 процент ирттерсе тултарнă. Чылай подсобнăй хуçалăхсем агротехникăллă мероприятисене вăхăтра туса ирттернĕ, начар мар пахча-çимĕç пуçтарса илнĕ. Куславккари комбинат, Вăрнарти спирт заводĕ, Сĕнтĕрвăррини спирт заводĕ çумĕнчи хуçалăхсем унти работниксене служащисене валли çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çителĕклĕ хатĕрлесе хăварнă.

Анчах пирĕн предприятисем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пурах. [illegible] Çĕмĕрле комбинат çумĕнчи хуçалăх [illegible] гектартан 120 центнер çĕрулми [illegible] вырăнне 58 центнер çеç, «Большевик» завод çумĕнчи хуçалăх 90 центнер çеç туса илнĕ.

Уйрăмах пирĕн подсобнăй хуçалăхсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси, унăн тухăçлăхне ӳстересси тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çавăнпа подсобнăй хуçалăхсем пурте пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене тултарса пыраймаççĕ. [illegible] выльăхсене (сурăхсене, качакасене, кроликсене), кайăк-кĕшĕксене ĕрчетесси çине сахал çаврăнса пăхаççĕ. Республикăри промышленноçри предприятисем çумĕнчи 18 хуçалăхран [illegible] 89 сысна çеç [illegible]

Рабочисемпе служащисен апат-çимĕç базине тăвас тĕлĕшпе—çак çулта [illegible] центнеринчен ытла Буинскри сланец рудникĕн, Чебоксарти подсобнăй хуçалăхсем япăх ĕçленĕ. Вĕсем кăçалхи ялхуçалăх ĕççĕсен планĕсене, çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли заданисене тултарман. Ку хуçалăхсенче пур пек условисемпе тата майсемпе пĕлсе усă курма, кашни ĕçе хăй вăхăтĕнче тума вĕренсе çитмен. Вĕсен руководителĕсем куллен-хи ĕçре пуçарусăрлăх, хуçалăхра тип-терсĕрлĕх палăртаççĕ.

Пирĕн предприятисем çумĕнчи подсобнăй хуçалăхсем халĕ малалла аталанса пыраççĕ, вĕсем хăйсен организациллĕ вăхăтне пурăнса ирттереççĕ. Çавăнпа вĕсен умĕнче халĕ питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Чи малтанах, вĕсен кăçалхи çуракине тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илмелле. Ку ĕçре иртнĕ çуркуннехи йăнăшсемпе çитменлĕхсене (вăрлăхсене малтанах хатĕрлеменни, çавăнпа çĕр лаптăкĕн пĕр пайне акмасăр хăварни, ирхи пахча-çимĕçсене ӳстермелли парниксем пулманни т. ыт. те) тумалла мар, вĕсене шута илсе, çуракине ирттерме мĕн кирлине пĕтĕмпех хатĕрлесе хумалла. Ĕç хатĕрĕсене тунă çĕрте вырăнти ресурссемпе, производствăран юлакан материалсемпе туллин усă курмалла. Подсобнăй хуçалăхсен хăйсен транспортне, туртăм вăйне тытмалла тăвас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттермелле.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çак çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, подсобнăй хуçалăхсен çитес ялхуçалăх çулĕнче акмалли çĕр лаптăкне, выльăх-чĕрлĕх йышне тата унăн тухăçлăхне чылаях ӳстермелле пулать. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, подсобнăй хуçалăхсен çуркунне акса тата лартса хăварма кирлĕ, тырпулсен, [illegible]

[illegible] работниксен хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пымалла, рабочисемпе служащисене кирлĕ апат-çимĕç базине вырăнтах çителĕклĕ тăвассишĕн кĕрешмелле.

Йăлтах фронт валли!

Калинино районĕнчи колхозниксем çак кунсенче фронтри хыпарсемпе пурăнаççĕ. Хĕрлĕ Çарăн паттăр чаçĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç çĕнтерӳллĕ наступлени туса пыни вĕсене чĕререн савăнтарать, фронтшăн, çĕнтерӳ тăвассишĕн тата лайăхрах та нумайрах ĕçлеме хавхалантарать.

Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвне итленĕ хыççăн, юлашки икĕ кун хушшинче Ленин ячĕпе тăракан колхоз хатĕрлев пунктне 225 центнер, Мăн Явăш ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз 150 центнер тырă леçсе панă.

«Смычка» колхоз (председателĕ Ландышев юлташ) Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕçе лайăх туса пырать. Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвне итленĕ хыççăн, колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли чылай ăшă япаласем пухрĕç. Икĕ кун хушшинче вĕсем 5 килограмм çăм, 9 тир, 13 метр пир, 3 мăшăр алшиш тата ăшă япаласем туса хатĕрлеме 2.000 тенкĕ укçа пухса панă.

Районри колхозниксем декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене валли 132 кĕрĕк пиншак, 4 жилет, 52 ваткăллă фуфайкăпа 22 шалавар, 120 кĕпепе 91 кальсон, çăм алшишсемпе перчаткăсем 81 мăшăр, носкисем 51 мăшăр, 88 мулаххай, 6 çивитти, 194 алшăллипе 60 простыня тата ытти япаласем пухса панă.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** хули районĕнче тата **Центральнăй** фронтра, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса, малтанхи еннеллех наступлени туса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче Сталинград районĕнче пирĕн летчиксем противникăн виçĕ моторлă 50 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче 20 танка çити, тата войскăсемпе тĕрлĕ грузсем турттарса пыракан 300 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă, 2 поезда çĕмĕрнĕ, артиллерин 15 батарейине тата минометсен 5 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр полк таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн войскăсем противник çине персе тăнă тата разведка тунă. Пирĕн подразделенисем противникăн вак группиисен атакисене сирсе янă, противник йышăнса тăракан темиçе дзотпа çурта çавăрса илнĕ. Кунсаçа тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Хулан кăнтăр хĕрринче артиллерирен тата минометсенчен хирĕç-хирĕç персе тăнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем Дон шывĕн сулахай хĕрринче наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Противник, совет чаçĕсене малалла куçма чарас тесе, вĕсене хирĕç тăрать. Пирĕн боецсем тăшманăн оборонине çĕмĕрсе малалла куçса пыраççĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем пĕр тĕреклетнĕ пункт патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ 40 танкне тытса илнĕ, нимĕçсем вĕсемпе огневой точкăсем вырăнне усă курнă пулнă. Çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене нумай вĕлернĕ. Противник хăйĕн Сталинград патĕнчи группировки валли боеприпассемпе продовольствие транспортнăй самолетсемпе илсе пыма хăтланать. Пирĕн летчиксем сывлăшра нимĕçсен «Юнкерс—52» йышши 20 самолетне, аэродромсенче—30 самолетне пĕтерсе тăкнă. Сталинград районĕнче кунсаçа, çапла ĕнтĕ, мĕнпурĕ противникăн виçĕ моторлă 50 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă позицисене тĕреклетнĕ тата уйрăм участоксенче малалла куçса пынă. Н-ски соединени 700 нимĕç салтакĕпе офицерне, 8 танк, 3 бронемашина, 74 автомашина, 7 оруди пĕтерсе тăкнă, противникăн 66 блиндажĕпе дзотне ишĕлтернĕ. Н-ски чаçăн танкисчĕсем пысăк ăнăçусем тунă. Тăшманпа çапăçса, вĕсем ултă кĕпçеллĕ 11 миномета, 10 бронемашинăна пĕтерсе тăкнă тата нимĕç пехотин икĕ батальонне аркатса тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра Андрюшенкăпа Игошин юлташсем ертсе пыракан боецсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ. Пирĕннисем 3 танк, 39 оруди, 30 автомашина, 3 радиостанци, боепирпассен 5 складне, япаласен 2 складне тата продовольствин 2 складне, 47 пин патрон тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕ тытса илнĕ. Великие Луки хулинчен хĕвелтухăçнерехри районра Михайлов юлташ ертсе пыракан чаçăн боецĕсем 1.700 гитлеровеца вĕлерсе тăкнă тата нимĕçсен 9 танкĕпе бронемашинине персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем 3 кун хушшинче тăшманăн 700 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Артиллерипе минометсенчен персе 20 дзота тата 14 блиндажпа землянкăна ишĕлтернĕ, 6 станковăй пулемет, 2 оруди, пĕр миномет тата противникăн боеприпассемпе продовольстви турттарса пыракан 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи партизансен отрячĕ виçĕ уйăх хушши çапăçса фашистсен 7 каççине ишĕлтернĕ, шоссе çулĕсем çинчи 9 кĕпере çунтарса янă тата 340 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Унсăр пуçне, тепĕр отрядри партизансем противникăн пĕр поездне ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, противникран тасатнă территори çинче, гитлеровецсем асаплантарса вĕлернĕ 4 красноармеецăн виллине тупнă. Аманнă совет боецĕсене тыткăна илсен, нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем вĕсене тискеррĕн мăшкăлланă тата хаяррăн асаплантарнă. Бандитсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене йăлтах çарамаслантарнă. Палачсем пĕр боеца икĕ тĕлтен çĕçĕпе чикнĕ тата аллаппине касса пĕтернĕ. Фашистла ирсĕрсем икĕ боецăн мăйĕсене каснă тата ар ортăнĕсене тăпăлтарса кăларнă. Тăваттăмĕш красноармеецăн пуçне çапса çĕмĕрнĕ. Çав боецсен виллисене вара фашистсем халăх пурăнакан пунктăн хĕррине кăларса пăрахнă.

Декабрĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлени туса пынă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противник çине персе тăнă тата унăн вак группиисен атакисене сирсе сирсе янă. Хулан заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн артиллери нимĕçсен 9 дзотĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, артиллерин 2 батарейине тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнă. Хулан кăнтăр хĕрринче, минометсемпе персе, противникăн пĕр çĕре пухăнса тăнă пехотине сапаласа янă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем Дон шывĕн сулахай енче наступлени тунă. Н-ски чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан тĕреклетнĕ пунктра хӳтĕленсе тăнă нимĕçсене фронт енчен пырса аталанă. Çав вăхăтра пирĕн ытти подразделенисем противника флангран пырса çапнă. Хăйсене çавăрса илессинчен хăраса, гитлеровецсем вара пĕр йĕркесĕр каялла чакнă, çапăçу хирĕнче 300 вилĕ тата хĕçпăшалсемпе тĕрлĕ çар пурлăхĕ нумай пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра Дубровский юлташ ертсе пыракан артиллеристсем нимĕçсен 19 дзотĕпе блиндажне пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă тата артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă.

Пирĕн летчиксем декабрĕн 1-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 7 самолетне персе ӳкернĕ тата аэродромсем çинче 20 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем йышăннă рубежсенче çирĕпленсе тăнă, вĕсен малти отрячĕсем противникпа активлăн кĕрешнĕ. Пĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем 25 дзота ишĕлтернĕ, 21 огневой точкăна пĕтерсе тăкнă тата противникăн опорнăй пунктне тытса илнĕ. Çав çапăçура нимĕç пехотин батальонне аркатса тăннă тата вĕсен персе çĕмĕрнĕ 4 танкне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противникăн транспортнăй самолетне персе ӳкернĕ. Çав самолетăн экипажне тыткăна илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступлени туса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Ржевпа Вязьма хушшинчи чугунçул районĕнче пирĕн чаçсем пĕр яла, противник оборонăн тĕреклетнĕ узелĕ туса хунăскере, тытса илнĕ. Çав ялшăн пынă çапăçура нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 2 самолетне персе ӳкернĕ. Зенитнăй артиллери противникăн 3 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнче кĕрешекен отрядри партизансен пĕр ушкăнĕ чугунçул çинчи 3 кĕпере сирпĕнтерсе янă, вĕсен хуралĕсене вĕлерсе пĕтернĕ. Чугунçулăн çав участокĕ тăрăх вара поездсем çӳреме чарăннă. Ленинград облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен карательнăй отрячĕ чарăннă яла тапăннă. Çапăçура 10 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Украина республикинчи Николаев хулинче тискер ĕçсем туни çинчен хыпар илнĕ. Çав хулана оккупациленĕренпе гитлерла бандитсем унта пиншер мирлĕ çынна асаплантарса тата персе вĕлернĕ. Хулари халăхăн çуррине ытла нимĕçсем ирĕксĕрлесе Германие каторгăлла ĕçе ăсатнă. Хулара юлнă çынсене ирĕксĕрле ĕç ĕçлеме хăвала-хăвала каяççĕ. Ĕçе тухманнине саботаж тесе шутлаççĕ, уншăн пысăк наказани пăраççĕ, персех те пăрахаççĕ. Октябрь уйăхĕн вĕçĕнче фашистла палачсем çав хулара чирлĕ тата ĕçлеме пултараймаан 167 хĕрарăма ĕçе тухманшăн çеç персе вĕлернĕ. Николаевра пурнăç пĕтсе ларнă. Оккупантсем предприятисене ĕçлеттерме тăрăшни совет патриочĕсем вăйлăн хирĕç тăнипе нимĕнсĕрех пĕтсе ларать. Çавна пула нимĕçсем юлнă оборудование Германие илсе кайма тытăннă.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Ленинград фрончĕ). **Ӳкерчĕк çинче:** Танксемпе пыракан автоматчиксен десанчĕ.
Г. ЧЕРТОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фото хроники).

Центральнăй фронтра

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Ржевран хĕвеланăçнерехре совет çарĕсен чаçĕсем, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Тăшманăн çирĕплетнĕ пункчĕсемшĕн çапăçусем уйрăмах хаярланса каяççĕ.

Кĕтмен çĕртен пырса çапса, пирĕн чаçсем нимĕçсен егерски батальонне, пĕр яла хӳтĕлесе тăнăскерне, пуçĕпех аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 500 яхăн вилли выртса юлнă.

Халăх пурăнакан пунктсемшĕн пыракан çапăçусенче фашистсен хирĕç тăракан гарнизонĕсене совет чаçĕсем халран яраççĕ, вĕлере-вĕлере пĕтереççĕ. Красноармеецсемпе командирсен çапăçури хастарлăхĕ ӳссех пырать. Капитан Филимонов командир пулса ертсе пыракан батальонăн пĕр питех те кирлĕ çула, противник хӳтĕлесе тăраканскерне, тытса илмелле пулнă. Боецсем темиçе ушкăна уйăрăлнă та, тăшман вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, унăн позицийĕсем патне çывхарнă. Тăшманăн огневой точкисене пирĕн воинсем хăватлăн пырса çапнă. Пехотинецсене артиллеристсем ăста пулăшнă. Тăшманăн оборонине çĕмĕрсе кĕрсе, пирĕн боецсем нумай фашистсене вĕлерсе пĕтернĕ тата 10 оруди, боеприпассен складне тытса илнĕ. Батальон ăнăçлăн малалла куçса пырать.

Çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра кĕçĕн сержант Скороспелов юлташ противника атакăлакан красноармеецсене ертсе кайса, нимĕçсен дзотне çĕмĕрсе кĕнĕ те унта алвĕççĕн тăрса çапăçса, темиçе нимĕçе штыкпа чиксе пăрахнă, юсавлă пулемета боеприпассемпе пĕрлех тытса илнĕ. Тăшман пысăк çухатусем тӳссессĕн те, çаплах хирĕç тăнă, пирĕн пехотăна малалла кайма чăрмантарнă. Скороспелов, тин кăна тытса илнĕ пулеметран вăйлăн пеме пуçласа, тăшмана сирсе пăрахма хамăрăн пехотинецсене вăхăтра пулăшу панă.

Пирĕн войскăсем тĕрлĕ майсемпе усă курса наступлени тăваççĕ. Пĕр вырăнта тăшмана пехотинецсемпе артиллеристсем тата танкистсем пурте пĕрле пулса пырса çапаççĕ. Тепĕр вырăнта боецсем фашистсен подразделенийĕсене штык вĕççĕн тăрса çапăçтараççĕ. Красноармеецсем тăшмана час-часах флангсемпе тылран атакăлаççĕ.

Артиллерин Н-ски чаçĕ хăйĕн хăватлă та тӳрĕ лекекен вучĕпе пехота валли çул уçса парать. Пĕр кун хушшинче артиллеристсем 250 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ, 6 дзота, 9 пулемета çĕмĕрнĕ тата орудисен 4 батарейине, минометсен 3 батарейине пусарса лартнă. Гварди сержанчĕн Лисанинăн оруди расчечĕ хăвăрт та тĕл пенин тĕслĕхне кăтартса панă, вăл пĕр çапăçура нумай нимĕçсене тата оруди батарейине пĕтерсе тăкнă.

Гвардеец артиллеристсем разведка ĕçне лайăх йĕркеленĕ. Çавăнпа вĕсем тĕл кăна переççĕ. Лихачевпа Сгибнев артиллеристсене нимĕç миномечĕсен батарейи, пирĕн пехотăна малалла куçма вăйлăн чăрмантарса тăраканскер, ăçта вырнаçнине йĕрлесе пĕлме хушнă. Татти-сыпписĕр персе тăнине пăхмасăрах гвардеецсем противникăн огневой позицийĕсем патне çывăхах шуса пынă та, тăшманăн батарейи ăçта вырнаçса тăнине палăртса, ун çинчен хăйсен командирне тĕрĕс координатсем панă. Тепĕр темиçе минутăран пирĕн орудисем харăссăн персе янă та, минометсен батарейи фашистсен минометчикĕсемпе пĕрлех сывлăшалла сирпĕннĕ.

Халь пыракан çапăçусенче тăшман пысăк çухатусем тӳсет. Гитлеровецсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе, пирĕн чаçсем малаллах куçаççĕ.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Искусствăпа литература работникĕсен фашизма хирĕçле митингĕ

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Мускавра искусствăпа литература работникĕсен фашизма хирĕçле митингĕ пулса иртнĕ.

Митинга вырăс, Украина, Белорусси, Азербайджан, Грузи художествăллă интеллигенцийĕн представителĕсем 2.000 çын ытла пухăннă. Митингăн хисеплĕ президиумне Сталин, Молотов, Ворошилов, Каганович, Калинин, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Берия, Шверник, Маленков, Щербаков, Вознесенский юлташсене суйлама сĕннине митинга пухăннисем тăвăллă оваци туса кĕтсе илнĕ.

Митинга писатель-академик **А. Н. Толстой** уçнă.

— Ĕлĕкхи вăрçăсен примерĕпе пăхсан, тупăсен кĕрлевĕ поэтăн сассине хупласа лартмалла пек, вăрçă вăхăтĕнче искусство хăйĕн пахалăхне чакармалла пек, вăл е пачах та шăпланса лармалла пек туйăнать. Анчах, çук! Фашизм организациленĕ тискер çынсен çарне хирĕç пыракан юнлă кĕрешӳре совет халăхĕ хăйĕн шухăш-кăмăл вăйне ытларах та ытларах пухса пырать, вăл хăйĕн искусствинчен аслă тĕрĕслĕх, аслă та ырă ĕç çинчен анлă сăмахсем ытларах та ытларах çине тăрса ыйтать. Вăрçă кунĕсенче совет искусстви халăхăн геройла чунĕн сасси пулса тăчĕ. Паян эпир Мускавра хамăрăн ĕçсемпе шухăшсем тата туйăмсем çинчен, эпир кĕрешме тата çĕнтерме иксĕлми çирĕп тăни çинчен пĕтĕм тĕнчене, хамăрăн мĕнпур тусăмăрсене каласа пама пухăннă. Совет искусстви çулăмлăн юратма пĕлет, вăл çавăн пекех тăшмана хаяррăн кураймасăр тăма пĕлет.

Митингра çаксем тухса каланă: РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ композитор **Д. Д. Шостакович**, архитектура академийĕн президенчĕ **В. А. Веснин**, СССР халăх артистки **В. В. Барсова**, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ-художник **А. М. Герасимов**, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен комитечĕн председателĕ **М. Б. Храпченко**, СССР халăх артисчĕ **И. М. Москвин**, Украина писателĕ **Микола Бажан**, РСФСР халăх артисчĕ **Н. К. Черкасов**, СССР халăх артистки **Л. П. Александровская**, Азербайджан писателĕ **Самед Вургун**, РСФСР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, кинорежиссер **И. А. Пырьев**, УССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ **А. П. Довженко**, РСФСР халăх артисчĕ **И. Я. Судаков**. (ТАСС).

СОВЕТ СОЮЗНЕ КĔРЕШЕКЕН ФРАНЦИН ЛЕТЧИКĔСЕМ КИЛНĔ

Кĕрешекен Франци летчикĕсен пĕр ушкăнĕ Совет Союзне килнĕ. Вĕсем Совет летчикĕсемпе пĕрле пулса хăйсен пĕрлехи тăшманне — Италипе Германи фашисчĕсене хирĕç кĕрешме кăмăл тунă. Вĕсем хушшинче 20 офицер тата кĕçĕн командирсемпе рядовойсем 40 çын пур. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри Францин чи чаплă летчикĕсем шутланса тăраççĕ, нимĕçсемпе фашистсен вăйĕçене хирĕç пыракан вăрçăра вĕсем хăйсене палăртнă ĕнтĕ. Çав летчиксенчен пĕри—капитан, Лотарингире çуралнăскер, çӳлти пилотажа питĕ ăста тунипе паллă пулса тăнăскер, тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ, 5 самолетне сиенленĕ. Çав ушкăнри нумай летчиксем Италипе Германи авиацине хирĕç кĕрешнĕ çĕрте пысăк хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнă. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партие илес ĕçе лайăхлатмалла

ШАХАСАН. Çак кунсенче пулса иртнĕ районри коммунистсен пухăвĕ 1942 çулăн иккĕмĕшпе виççĕмĕш кварталĕнче парти ретне илес ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе-яврĕ.

Ку ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Соколов юлташ доклад турĕ.

Кăçалхи 6 уйăх хушшинче районра парти ретне пĕтĕмпе 30 çынна илнĕ, вăл шутран 10 çынна члена илнĕ. Парти ыйтăвне ӳстерес тĕлĕшпе Анат Сувăрри пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Иванов юлташ) начар мар ĕçлет. Унта 1942 çулта парти членне 2 çынна, ВКП(б) членĕн кандидатне 3 çынна илнĕ.

Анчах, районĕпе илсен, парти ретне илес ĕç çителĕксĕр пулса пырать-ха. Кандидатсене члена куçарас ĕç те çителĕксĕр пулса пырать. Çавна пула паянхи куна районра стаж иртнĕ кандидатсем 11 çын шутланаççĕ. Комсомолецсене парти ретне илесси те кирлĕ пек пулса пымасть.

Доклад хыççăн 7 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем партие илес тĕлĕшпе начар ĕçлекен пуçламĕш парторганизацисен ĕçĕсене тишкерчĕç, ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç. Пуху партие илес ĕçе тĕпрен лайăхлатма хушрĕ.

В. ЯКОВЛЕВ.

Комсомол организацийĕ сӳрĕк ĕçленĕ çĕрте

СЕНТЕРВАРРИ. Юртакасси ялсоветне кĕрекен «Искра» колхозри комсомолăн пуçламĕш организацийĕ начар ĕçлет. Кăçал пĕр пуху та туса ирттермен. Комсомол организацийĕ союзра тăман çамрăксем хушшинче нимĕнле ĕç те туман. Çавна пула комсомолецсен йышĕ ӳсмест. Колхозра тăрăшса ĕçлекен çамрăксем сахал мар. В. Брусов, А. Анчуков, Н. Яковлев, Г. Владимиров çамрăксем колхоз производствине активлăн хутшăнаççĕ.

Комсомол организацийĕ агитаципе массăллă ĕçе те организацилемен. Колхозниксене тĕнчери хару-пару çинчен, Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче пулса иртекен событисем çинчен ăнлантарса памаççĕ. Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ докладне ăнлантарса парас ĕçе те начар организациленĕ. Колхоз авăн çапас тĕлĕшпе районра юлса пырать. Авăн çапас ĕç юлса пыни молотилкăсемпе анлăн усă курманнипе, колхозниксем авăн çапма сахал тухнинчен килет.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

Осоавиахим райсовечĕ начар ĕçлет

КАЛИНИНО. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Осоавиахим райсовечĕсем умĕнче халăха вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе пысăк задачăсем тăраççĕ. Анчах кунти Осоавиахим райсовечĕ пуçламĕш организацисене çар ĕçне вĕренмелли хатĕрсемпе (учебнăй винтовкăсемпе, гранатăсемпе, противогазсемпе) пулăшмасть. Нумай çамрăксем ПВХО, ГСО, ВС значокĕсен нормисене парасшăн. Анчах, Осоавиахим райсовечĕ пуçламĕш организацисене кирлĕ пек пулăшман пирки, вĕсем оборона ĕçне вĕренеймеççĕ, оборона значокĕсен нормисене параймаççĕ.

Уйкас Явăшри пуçламĕш организаци [illegible] кайнă. Çавăн пекех Мăн Явăшри пуçламĕш организаци те саланса кайнăпа пĕрех. Унта çулталăк ытла пĕр уксăк пухман, кăçал пĕр пуху та ирттермен, пĕр çамрăка та члена илмен.

И. ФЕДИНГИН.

Пирĕн землянксем

Хăюллă летчик

Захар Ефремович Забродин хăйĕн ывăлне—Шурăна курманни темиçе çул ĕнтĕ. Çапла-çке вăл: ача-пăчана ӳстерсе тĕн те, куçпа тăраначчен пăхса та юлаймастăн, çунатланнă кайăк чĕпписем йăваран вĕçсе туха-туха кайнă пек, саланса пĕтеççĕ.

Шура Забродин, Аркассинчи пуçламĕш шкултан вĕренсе тухсан, Горькинчи ФЗУ шкулĕнче вĕреннĕ. Ун хыççăн Шупашкарта, çыхăну ĕçĕнче ĕçленĕ. 1935 çулта Хĕрлĕ Çара кайнă. 1938 çулта унăн тахçанах ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнĕ. Вăл Киеври летчиксен шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Кунта вĕреннĕ çĕрте Шупашкарта ĕçленĕ чухне производствăран уйăрăлмасăр аэроклубра вĕренни питĕ усăллă пулнă. Вăл летчик пулса тăнă. Вăл хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне, пурнăçне совет авиацийне панă.

Виçĕ çул каялла Шура хăйĕн армĕпе кĕске вăхăтлăха тăван ялне отпуска килсе кайнă. Çавăнтанпа ĕнтĕ Захар Ефремович юратнă ывăлĕпе çыру урлă анчах çыхăну тытнă. Шурăн çырăвĕсем тăван кил-йышне, тăван колхоза, тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратнине, вĕсемшĕн хăйĕн пурнăçне те пама хатĕр тăнипе çунса тăнă. Вăл çĕнтерӳ пирĕнте пулассине шанса, 61 çулхи ашшĕне, темле йывăр пулсан та чăтма, колхоза çирĕплетессишĕн тăрăшса ĕçлеме хавхалантарнă. Захар Ефремовича тăван ывăлĕн çăмахĕсем вăй панă, çирĕплетнĕ. Ăна колхозниксем колхоз председательне суйланă. Пысăк ĕç, ответлă ĕç. Ĕçлес пулать, ахаль юрамасть,—вăрçă. Çĕршыв пысăк йывăрлăх тӳсет. Çак йывăр тапхăрта Забродинпа ывăлĕ те Ленин—Сталин парти ялавĕ айне тăнă—парти членне кĕнĕ. Пĕр шухăшпа, пĕр тĕллевпе пурăннă, ĕçленĕ: тăшмана хăвăртрах çапса çĕмĕрмелле. Ывăлĕ—фронтра, ашшĕ—тылра,—пĕр ĕçех тунă.

Шура колхозниксем патне çырнă: «Фронтовиксенчен пример илĕр. Ырми-канми ĕçлесе нумайрах тырпул, пахча-çимĕç туса парăр, Хĕрлĕ Çара пулăшăр. Тăшмана пĕрле çĕмĕрер». Колхозниксем çĕршыв умĕнче, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар умĕнче парăмра юлман. Тăрăшса ĕçленĕ. Çĕрне-кунне пĕлмен. Хĕрлĕ Çара пулăшнă. Тырпула кĕске вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕнĕ, государство умĕнчи парăмсене вăхăтра татнă.

Шура та хăй черечĕпе тăван килйыш, тăван колхоз, тăван çĕршыв умĕнче парăмра юлман. Вăл, хăйĕн пурнăçне хĕрхенмесĕр, тăшманпа хаяррăн кĕрешнĕ. Хăйĕн бомбардировщикĕпе вăл боевой заданисене пурнăçлама çĕр хут та ытла вĕçсе кайнă. Тăшман пуçĕ çине вилĕм тăкнă. Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратни, тăшмана курайманни, ăна боевой заданисене пурнăçлама пулăшнă, ăна нимĕнле йывăрлăхсем те чарса тăма пултарайман.

...Л. хулине тăшман çавăрса илнĕ. Геройла çапăçакан хулана продовольстви кирлĕ пулнă. Хулапа çĕршыва çыхăнтаракан çулсене тăшман тытса илнĕ. Пĕртен-пĕр «ансăр çул» çеç юлнă. Вăл кӳлĕ урлă, çырмасатрасем урлă выртнă. Ку çул тăрăх самолетсем çеç çӳреме пултарнă.

Кĕркуннехи пĕр тĕтреллĕ кун Александр Забродин, яланхи пекех, хулана вĕçсе кайма боевой задани илнĕ. Йĕри-тавра нимĕн те курăнман. Анчах Забродин пĕлнĕ: ăна леро кĕтеççĕ. Вăл хăйĕн бомбардировщикĕ çине ларса çула тухнă. Чылай кайсан, вĕсен мотор ĕçлеме чарăннă. Ирĕксĕрех анмалли вырăн шырамалла пулнă. Вăл çирĕпех шăкăйман кӳлĕ çине ăнăçлăн анса ларнă. Финсем тахçанах çакна кĕтнĕ, вĕсем совет летчикне чĕрĕлле илме шутласа, ăна çавăрса илнĕ. Забродинăн тăшман аллине лекесси асра та пулман, вăл хирĕç тăма, юлашки юн тумламĕччен çапăçма хатĕр пулнă. Çав вăхăтрах мотора хăвăрт-хăвăрт юсанă. Финсем совет соколне хăйсен вараланчăк аллинче пек курнă, ăна тытнăшăн наград илнĕ пек туйăннă вăхăтра Забродин хăватлă кайăкне сывлăша çĕкленĕ те малалла çул тытнă. Пăр çумĕнчен уйăрăлнă чух самолетăн пĕр урапи çакланса, пăрсем хушшинче хĕсĕнсе юлнă. Вăл çапах та вырăна çитсе чиперех анса ларнă.

Кунашкал эпизодсем вăрçă пуçланнăранпа Забродинăн сахал мар пулнă. Тепĕр чухне зениткăсем ан персе ӳкерчĕр тесе питĕ аялтан вĕçме тивнĕ. Вĕсен вĕçмелли çулĕ питĕ ансăр пулнă. Çулăн икĕ аяккипех тăшманăн зениткисем кĕпçисене, выçă кашкăрсем пек, çӳлелле каçăртса ларнă. Совет самолечĕ курăнсанах татти-сыпписĕр пенĕ.

Сталинград патĕнче Забродин тăшманăн колоннисене çĕмĕрнĕ çĕрте хĕрӳллĕн ĕçленĕ. Вăл, кунка лăччен темиçе хутчен бомбăсем тиесе кайса, хулана хупăрлакан фашистсем çине тăкнă. Тăшманăн боевой техникине, чĕрĕ вăйне çĕмĕрнĕ.

Забродин юлташ халь кĕске вăхăтлăх отпуска килсе кайрĕ. Вăл колхозниксем патĕнче, район центрĕнчи рабочисемпе служащисем патĕнче пулчĕ. Совет соколĕсем тăшманпа мĕнле çапăçни çинчен каласа пачĕ, хăйĕн юлташĕсемпе—летчиксемпе мухтанчĕ. Хăй çинчен именсе, сăмахсене хĕрхенсе тейĕн, каласа парать.

— Мĕнех тунă-ха эпĕ çынсенчен уйрăм?—тет вăл.—Кашни совет гражданинĕ тума тивĕçлĕ ĕçе—тăшманпа пурнăçа хĕрхенмесĕр çапăçма тивĕçлĕ ĕçе çеç тунă. Çапла пулмалла та—çакăнта хаяр тăшмана çĕнтерес шанчăк. Унăн кăкри çинчи Хĕрлĕ Ялавпа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем Забродин тăван çĕршывшăн мĕнле çапăçнине лайăх хак параççĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Лайăх ĕçлекен ялсоветĕ

Вера Михайловна Кармакова юлташ ертсе пыракан ялсоветне Ленин ячĕпе тăракан тата «Заря» колхозсем кĕреççĕ. Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз тырпулсене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕртрĕ. Паянхи куна пур йышши культурăсене те пĕтĕмпех çапса пĕтернĕ. Государствăна тĕштырă, аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм, кантăр тата пахча-çимĕçсем памалли обязательствăсене 100 процентчĕпех пурнăçланă.

«Заря» колхоз та пысăк çитĕнӳсем турĕ. Колхоз государство умĕнчи парăмсене те парса татнă. Выльăх-чĕрлĕхсем ăшă витере тăраççĕ.

В. Кармакова—инвалид. Çапах та вăл хăйĕн ĕçне тыслăн пурнăçласа пырать.

— Манăн упăшка фронтра нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçать. Эпĕ кунта, сывлăх начартарах пулсан та, упăшкашăн та ĕçлеме тăрăшатăп,—тет В. Кармакова.

Ялсовечĕ укçа-тенкĕ пухас плана тултарнă. Лайăх, тăрăшса ĕçленĕшĕн В. Кармаковăна районри финанс отделĕ преми памалла тунă.

В. Кармакова çак çитĕнӳсемпе [illegible] ланса лармасть, ялсоветне районра пĕрремĕш вырăна кăларассишĕн тăрăшать.

С. ПУДАКОВ.

ПАТРИОТКĂНА

Эпĕ Чăваш республикинчи Раиса Н. Т. учительницăран çыру илтĕм. Çак сăвва ăна ответлесе çыратăп.

Шавах: Салам, тесе çыраççĕ
Çынсем çыру çырма ларсан.
А эп: Мухтав, тесе пуçлатăп,
Никам çĕнми Хĕрлĕ Çара!

Мухтав ăна! Вăл арăслан пек
Сиксе ӳкет тăшман çине,
Вăл хурçă шăлĕпе турам-турамăн
Касса турать фашист пуçне.

Тăван çĕршыв—тăван аннемĕр
Пире вăрçа кĕме чĕнет.
— Пĕр хĕрхенмесĕр, ачасемĕр,
Вĕлерĕр,—тет,—нимĕççене.

—Сире ырми пăхса ӳстертĕм
Мĕн ачаран телей сунса,
Таса кăкăр сĕтне çитертĕм,
Вĕçтертĕм пăхаттир туса.

—Анчах паян мана пит йывăр:
Кăкăрăма çĕлен ĕмет.
Ун йăвине çитсе вут хурăр,
Патши таран вĕлерĕр!—тет.

Чăн çавăнпа вута кĕретпĕр,
Чăн çавăнпа эпир хаяр.
— Çĕршыв—анне, хăват пар! —
тетпĕр,
Çĕршыв—анне хăват парать.

* * *

Санпа вăйя пĕрле тухман эп,
Уллахсенче пĕрле пулман.
Е, тĕрĕсрех калас пулсассăн,
Пĕрне-пĕри нихçан курман.

Çавах, ирпе хĕвел тухсассăн,
Вĕри чĕрӳ аса килет.
Каçхи тӳпе çине пăхсассăн
Шавах сана куратăп эп.

Хура юнсем пайтах эп курнă,
Вут пек чĕрем çавах таса.
Сана аса илсен чăн пурнăç
Умма килсе тухать хавас.

Эс пĕччен мар—эс манăн халăх,
Çĕршывăм—ман, хĕвелĕм—ман!
Нихçан та чакмĕ ман вăйхалăм
Ялан санпа пĕрле пулсан.

Сан çыруна виç хут вуларăм,
Вунвиçĕ хут вулас килет!
Йĕркесерен—вĕри сăмах-мĕн,
Вĕри сăмах чуна çĕклет.

— «Шур çăм алса çыхса яратăп,—
Кĕрхи каçсен парни ятне, —
Хальччен курман-илтмен чăн хаклă
Юратнă тусăмçăм патне.

Аллу шăнсан асна ил, тетĕп,
Тата вăрçă хирне тухсан.
Çĕнтерӳпе килсем, кĕтетĕп,
Вара хăвах тупан тусна!»

Тав, тантăшăм! Сана асилĕп
Йăлкăшакан кăвар çинче.
Таса яту мана вăй кӳрĕ
Хура çĕлен пуçне çиме.

Таса яту хăмач ялав пек
Мана шавах мала чĕнет.
Татах калам: эс манăн халăх
А халăхшăн—вута кĕреп!

Хура юнсем пайтах эп курнă,
Вут пек чĕрем çавах таса.
Сана аса илсен чăн пурнăç
Умма килсе тухать шавах.

Çĕнтерӳсем инçе юлмарĕç,
Çĕнтерӳсем çитеç вĕсем.
Эс хыттăн кĕт мана, хĕр-тантăш,
Тăс аллуна, кĕтсе илсем!

Хисеплĕ ят илсе çитерĕ
Тивĕçлипех умна тăма.
Икĕ таса чĕре пикенĕç
Вĕр-çĕнĕрен телей тума.

Лейтенант ВЛ. БАРАЕВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ ÇАР.

Ют çĕршывсенче

Турци журналисчĕ Германи пропагандин хăтланăвĕсем çинчен кулса çырать

АНКАРА, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Турцин паллă журналисчĕ Джахид Ялчин «Ени сабах» хаçатра Германи пропаганди Сталинград районĕнче тӳснĕ поражениссем нимĕççене хытă шухăшлаттарнине вăйсăрлатас тесе темĕнле те хăтланни çинчен кулса çырать.

«Берлинри радио çапла калать,—тесе çырать Джахид Ялчин:—нимĕçсем Атăл тăрăх çӳрессине татасшăн пулса çеç Сталинграда штурмланă пулать. Атăл шанса ларнă пирки халь ĕнтĕ ун пек тума кирлĕ мар пулса тăнă пулать. Нимĕçсен радиокомментаторĕ малашне те çав логикăпах калас пулсан, вăл, тен, çапла та каласа хурĕ: нимĕçсем хăйсен продовольстви йывăрлăхĕсене сăмахлатас тесе тата вырăссемшĕн продовольстви йывăрлăхĕсем туса хурас тесе çеç хăйсен вунишар пин салтакĕсене вырăссен аллине тыткăна панă, тейĕ. Чăнлăх ак çакăнта: нимĕçсем вырăс çарĕн хăватне пула каялла чакаççĕ, çакна вĕсем пытарма та, çителĕклĕ ăнлантарса пама та пултараймаççĕ. Эркилет генерал та нимĕç çарĕн ĕçĕсем ăнманнине пĕлсе çитсе çапла каласа хунă: нимĕç çарĕ эпĕ панă канашсене итлеменнипе çавăн пек йывăр условисене кĕрсе ӳкрĕ, тенĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир çакăн пек вывод тăватпăр: нимĕççемшĕн йывăр кунсем пуçланаççĕ».

Болгарире Гитлера хирĕçле шухăш-кăмăлсем ӳссе пыраççĕ

СОФИЯ, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Интеллигенци хушшинче Гитлера хирĕçле шухăш-кăмăлсем ӳссе кайни Болгари правителĕсене ытларах та ытларах пăшăрхантарать. «Зора» хаçат Луков генералăн «интеллигенци обязанноçĕ» тесе ят панă статьине пичетлесе кăларнă. Ертсе пырас ĕçре интеллигенци пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса, автор çапла çырать: Çурçĕр Африкăна войскăсем илсе пырса антарнă противник ăнăçусем тунă пирки пирĕн интеллигенцин пĕр пайĕ иккĕленме пуçлани, унăн шухăш-кăмăлĕсем тайкаланма пуçлани пире пăшăрхантарать. Хăшпĕрисем çак факта тĕнĕл держависем вăрçăра поражени тӳснипе пĕрех шутлаççĕ. Çав вăхăтрах халăх масси хăйĕн интеллигенцийĕ çине шанса пăхать, хăй пулас пурнăçа ĕненнипе шаннине интеллигенци çирĕплетсе парасса кĕтет, тет. Луков интеллигенцие «тĕнĕл держависем çĕнтерес тĕлĕшпе иккĕленме пăрахма» сĕнет.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Англин пĕрремĕш армийĕ нимĕçсем питĕ пĕлсе минăсем хурса тухнă вырăнсем урлă малалла куçса пыраççĕ.

Французсен васкаса мобилизацилекен войскисене Америкăран килнĕ хатĕрĕсемпе хĕçпăшаллантараççĕ.

Союзниксен авиацийĕ çĕрле Бизертăри доксене тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Тунисран çурçĕреллерехре Англин пĕрремĕш армийĕ противника çыран хĕррипе пыракан çул патнелле хăваласа янă. Андерсон генерал, вырăнти условисемпе тата штурмовой отрядсемпе усă курса, противникăн вăйĕсене пайăн-лайăн уйăрса ярать. Халĕхи вăхăтра Бизертăпа Тунис хушшинчи çултан, противникшăн çав хуласем хушшинчи юлашки çыхăну пулса тăраканскертен, темиçе мильăра çапăçусем пыраççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Ливире Англи патрулĕсем Эль-Агейла çывăхĕнче активлăн кĕрешнĕ. Авиаци тăшманăн Бенгазири тата Сицили утравĕ çинчи çар объекчĕсене атакăланă.

ГЕРМАНИН ТУНИСРИ ВОЙСКИСЕНЕ ТРИПОЛИТАНИРЕН ТАТСА ХĂВАРНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен войскисем Сфакспа Габес хушшинче Тунис çыранĕ патне пырса тухнă. Америкăпа Францин Тунисри чаçĕсем тĕнĕл держависен войскисен Триполитанипе тытакан çыхăнăвне татнă.

--O--

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ФРАНЦИ ÇАРНЕ САЛАТСА ЯРАÇÇĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Франци çарĕпе флотне салатса яраççĕ, çак ĕçе вĕсем васкаса тăваççĕ. Лондонри французсем хушшинче Марсельпе Тулонра нимĕççене хирĕç пысăк демонстрацисем пулса иртни çинчен пĕлтереççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх. Буна—Гона районĕнче (Çĕнĕ Гвинея) вăрçă ĕçĕсем хаярланнăçемĕн хаярланса пыраççĕ. Вăйлăн çапăçса малалла куçса, союзниксен войскисем Гонаран хĕвелтухăçнерехре çыран патне пырса тухнă, унта вĕсем Японин çыхăну линийĕсене татнă.

Японин Гвадалканар утравĕ çинчи оборона линийĕсене те чылай пысăк сиен кӳнĕ.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔН КИТАЙРА ТУНĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америка самолечĕсем японецсем оккупациленĕ Кантон хулине тапăннă. Пăрахнă бомбăсем Японин çĕр çинче ларнă самолечĕсене чылай пысăк сиен кӳнĕ. Сывлăшри çапăçура противникăн 23 самолетне персе ӳкернĕ. Америка авиацийĕн сухату пулман.

КĔСКЕН

Французсен Тулонран тарнă подводнăй лодкисем—«Марсуэн» тата «Касабланка» — Алжира пырса çитнĕ.

* * *

Чили правительстви хăйĕн Вишири ĕçĕсен поверенныйĕне каялла чĕнсе илнĕ.

Çĕнĕ Зеланди правительстви Виши правительствипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахнă.

* * *

Рузвельт чĕннипе Пĕрлешӳллĕ Штатсене Польшăн премьер-министрĕ тата главнокомандующийĕ Сикорский генерал пынă.

* * *

Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕвеланăç çыранĕнчи судоверфьсенчен пĕринче çĕнĕ рекорд тунă. 10.500 тонна водоизмещениллĕ грузовой суднăна 14 кун та пĕр сехет те 9 минута хушшинче туса пĕтерсе, тавар тиесе, тинĕсе кăларса янă. (ТАСС).

ФРОНТРАН ИНÇЕТРЕ...

Çырма-çатраллă та тӳремлĕ вырăн. Унăн сусан çул çине кукăр-макăр пулса тухса выртнă. Аман пек авкаланса [illegible] иртет çырма. Выльăхсем çăра [illegible] сиĕ [illegible] мăшлаттарса çисе çӳреççĕ. Пĕр [illegible] уй. Çаксем Борис Гаврилова асăмĕнчен нихăçан та каймаççĕ. Ахă, йывăççенчен аялта çăхан вĕçсе иртет, вăл çак минутăра Гаврилова тăшман самолетне аса илтерет. Çак [illegible] шухăшра хыпса тухать те [illegible] курайманлăхăн хаяр туйăмĕпе [illegible]. Аялă выртакан уйхирĕн [illegible] пек пулса, Борис Гаврилов [illegible].

Çак [illegible] фронтран инçетре, радиопа [illegible] вăрçă çинчен пĕлтереççĕ, [illegible] аса илтереççĕ. Борис Гаврилова [illegible] сук, фронтри тар-тĕм [illegible] çитнĕ пек туйăнать. Пере, [illegible], хĕрсем чăваш юррине [illegible]. Çак юррăн сăмахĕсем [illegible] та пархатарлă. Хĕрсем [illegible] тăвансемпе çывăх [illegible] хумханни, урăхла калаçни [illegible] аса илни палăрать. Сĕрмыв-аннен телейĕ кунçулĕ [illegible] тăвансем кайни самантрах [illegible].

Çак [illegible] Борис Гаврилов нумай [illegible]. Нумай курнă вăл. Ирĕк [illegible] тĕттĕм нуличчен ĕçлене, [illegible] касмалăх тырпул тунă. [illegible] сулĕсем те «кĕр» енне [illegible]. Çĕр. Халĕ вăл хăйĕн хăватне тăван çĕршыва çак йывăр самантра çăлса хăварнă çĕре парать. Çирĕм пилĕк çул каялла пулнă пурнăçа кĕрешӳ çулĕсем витĕр çавăрăнса пăхать те, вăл хальхипе нимĕнле те виçме май çук тертлĕ пурнăçа аса илет. Тертлĕччĕ те юрлăччĕ ун чухне...

Çул тăрăх утать Борис Гаврилов. Акă, хăй колхозниксене кăтарту парса ӳстеттернĕ тырпул хăмăш пек хумханса ӳсет. Колхоз стройĕ ĕçхресченĕсене нуяп пурнăç çулĕ çине кăларчĕ. Хĕрсен юррине илтет, анчах шухăшĕпе вăл—инçетре, темиçе пин çухрăм аякра—Атăл çеçенхирĕсенче, Кавказ тăвĕсем патĕнче, Ленинград фронтĕнче, Баренц тинĕсĕнче. Уй хумханать. Усă çил пите сĕртĕнет. Борис Гаврилов хăйĕн умĕнче ывăлĕсене, тăванĕсене, хурçă пек çирĕпскерсене—тăван çĕршывăн шанчăклă çыннисене курать. Вăл мухтавлă. Тавраш ялсенче унăн çемьи çинчен кăмăлласа калаçаççĕ.

Вăл килне таврăнать те, çар тумĕпе тумланнă çынсен сăнӳкерчĕкĕсем çине пăха-пăха илет. Унта фронтри лейтенант Николай, военврач Лев, шофер Александр. Аслă Октябрь хыççăн çуралнă ывăлĕ Григорий—командир, ăна «За отвагу» медаль парса наградăланă. Хумханса, Борис Гаврилов çапла калать:

— Гавриловсем тăван çĕршыва сутмаççĕ. Кĕрешеççĕ. Анчах эпĕ кăна кунта...

Çулланнă пурнăçне манса, вăл çилленсе илет.

— Кутăруçăн çыру çырмарĕç-ха. Шарламаççĕ темле.

Гаврилов хăй арăмĕн айăнлă çыннăни пек пулса тутисем чĕтренине курать.

— Çыру çырмаççĕ, пулсан—ерçмеççĕ,—лăплантарса калаçа парать вăл арăмне,—паллах, нимĕççемпе вăрçаççĕ, хăлха чикки тыттараççĕ.

Вăл чарăнать. Арăмĕ те чарăнать. Анчах тулти йывăççем кăна шавлаççĕ. Çурçĕрчен лараççĕ вĕсем çавăн пек хумханулла кăмăл-туйăмпа. Вĕсен шухăшĕсем, сӳнме пĕлменскерсем, Николай, Лев, Александр, Григорий тата ытти тăванĕсем çапăçнă вăрçă хирĕсене вĕçеççĕ.

Борис Гаврилов вăрçă мĕнлине аван пĕлет. Хастарлăн çапăçатăн пулсан, вилĕм те каялла чакать. «Çырмаççĕ тетĕн,—вăл арăмне лăплантарать,—вăрçăра пур тĕрли те пулать». Питне ваталнипе типе пуçланă аллисемпе шăлса илчĕ те, арăмне лăплантарма хушрĕ:

— Пирĕн ывăлсем пирĕнпе ĕмĕрех лайăх пурнăçпа пурăнас тесе çапăçаççĕ. Вĕсем пĕр-пĕр çĕрте вăйя шеллесе çапăçсан, пире те начар пулать. Пирĕн чăваш çĕрне, халь хамăр пурăнакан яла вĕсем вăрçă хирĕнче хӳтĕлеççĕ. Куç çульна ан тăк—вăл пулăшмасть.

Куç харшисене хускатса, вăл малалла калама пуçлать:

— Пирĕн ывăлсенчен хăшне те пулин усал пуля лексен, çапах та ан кулян... Вăрçă—вăл туй мар.

Кунсем иртеççĕ. Август кунĕсем те иртрĕç. Колхозниксем хӳхĕм ӳснĕ тырпула пуçтарса кĕртрĕç. Борис Гавриловпа та ĕçе шуçăмпа пĕрле çĕкленсех ĕçлерĕ. Фронтра хĕрӳллĕ кунсем, Гаврилов патĕнче те хĕрӳллĕ кунсем пулчĕç.

— Пирĕн çĕр тухăçлă. Эпир тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара валли нумай тырпул турăмăр,—каласа парать Борис Гаврилов.

Колхозниксем вăл калаçнипе килĕшеççĕ, ĕçчен те ăста çыннăн кашни канашне хака хураççĕ. Ĕçе юратакансем умĕнче ватă колхозник яланах хисепре.

Малтанхи вăхăтра колхоз фермиччи ĕçсем пачах япăхланса кайнăччĕ. Ĕçе лайăхлатас пирки колхоз правленинче чылай шутлама лекнĕ. «Атьăр, Гаврилова фермăсен заведующийĕ пулса ĕçлеме лартатпăр», тенĕ правлени членĕсенчен пĕри. Кăна ыттисем те хапăл тусах йышăннă.

Фермăсене комплектласа çитермелле пулнă. Ку тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлесе, плана тултарнă. Хĕл çывхарса килет. «Пирĕн выльăхсем валли витесем хатĕр мар»,—шутланă Борис Гаврилов хăй ăшĕнче. Шутланă—тунă. Платниксен бригадине организацилеççĕ те ăна хăй ертсе пырать. Кĕске вăхăт хушшинчех лашасен витисене, пăру тата ĕне витисене тăваççĕ. Ытти витесене те юсаççĕ.

— Эпир начар ĕçлетпĕр-им?—Савăнса калать Борис Гаврилов.—Ĕнесенчен сĕт суса илмелли пачах тултартăмăр, сурăхсем те нормăран ытлашши çăм тачĕç. Çĕршыв пиртен выльăх-чĕрлĕх çимĕçĕсем ыйтать. Кирлĕ — паратпăр.

Кирлĕ!—вĕсем ăна параççĕ. Выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма апат-çимĕçĕн çирĕп никĕсне хывнă, силоса ытлашшипех хывса хăварнă. Ку çеç те мар, выльăхсем ăшă витесенче тăраççĕ.

Колхозăн ял хĕрӳллĕ ĕçре пурăнать. Фронтран инçетре вăл. Çапах та вăл фронт ыйтнипе туйса ĕçлет. Кĕлетсем патĕнче тырă тасатаççĕ, государство умĕнчи парăмсене татма каяççĕ, колхозниксем чугунçул валли вутă хатĕрлеççĕ,—çаксем вĕсем пурте «Урожай» колхоз членĕсем Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле хамăр оборонăшăн тăвакан ĕçсем.

Каçхине Борис Гавриловăн пӳртĕнче лампа çути çуталать. Ĕç пĕтерсе килнĕ хыççăн вăл, сĕтел çине таянса, кăрчăккипе хăйĕн ывăлĕсен çырăвĕсене пăхма ларать. Хăшĕсем—киввисем, хăшĕсем—çĕннисем. Тимлĕн, васкамасăр Борис Гаврилов çыру хыççăн çыру, нумай кунсем каялла ăçта та пулин блиндажсенче е окопсенче çырнăскерсене вуласа, пурăнма тата ĕçлеме вăй хал пухать. Вăл ăнланать: çак минутăра мухтавлă ывăлĕсем Атăлшăн, Лăпкă Доншăн, Киевпа Одессăшăн, хăйсен тăван та лăпкă Чăваш çĕрĕшĕн, ырă пурнăçшăн, ашшĕ-амăшĕсен мирлĕ ĕçĕшĕн çапăçаççĕ. Гаврилов тата пуринчен ытла çакна та лайăх пĕлет: Сталин юлташ каланă пек, пирĕн урамра та праздник пулать!

ЯКОВ СИГАЙ.

СОВЕТСКИ РАЙОН.

--O--

Пĕлтерӳ

Декабрĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн парткабинечĕнче (Чувашская ур., 6), лекцисем вулакан залра докладчиксемпе агитаторсем валли инструкциллĕ доклад пулать. Доклад теми: «Сталинла Конституци—çĕнтернĕ социализмăн конституцийĕ».

Лекцие ВКП(б) Обкомĕн лекторĕ Кузнецов юлташ вулать.

ВКП(б) ГОРКОМĔН ПАРТКАБИНЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Водосвет производит набор девушек для ускоренного обучения по специальностям машинистов, пом. машинистов, смазчиков и электриков. На время обучения выплачивается зарплата ученика, а по сдаче испытания выплачивается полностью зарплата соответственно полученной квалификации. Имеется столовая.

Обращаться: Водосвет, отдел кадров.

Водосвету требуется нормировщик по нормированию слесарно-токарных работ.

Обращаться: г. Чебоксары, Водосвет, отдел кадров.

3—1

Пропала лошадь, серой масти, мерин. О местонахождении просим сообщить: г. Канаш, подсобному хозяйству ВРЗ

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11816. Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.